# СĂВАПЛĂ ПАВЕЛ АПОСТОЛ КОЛОССĂРИ ЁНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

### 1-мěш сыпăк

*Саламлани*

1 Турă ирěкěпе Иисус Христос апостолě пулма тивěçнě Павел-
ран тата Тимофей тăванăмăртан — 2 Колоссăри сăваплă тата
Иисус Христоспа пěрлěхлě шанчăклă тăвансене. 3 Сире Атте
Туррăмăртан тата Иисус Христос Хуçамăртан ырăлăхпа канăç-
лăх пултăр.

*Колоссăри ěненекенсемшěн Турра тав туни*

Сирěншěн кěлě тунă чухне эпир Турра, Иисус Христос Хуçа-
мăрăн Ашшěне, яланах тав тăватпăр. 4 Мěншěн тесен эсир Хрис-
тос Иисуса ěненни çинчен, ытти ěненекенсене юратни çинчен
эпир илтрěмěр. 5-6 Хăвăр валли тӳпере хатěрленине эсир шанчăк-
па кěтетěр. Мěн хатěрлени çинчен вара эсир чи малтан чăнлăх
сăмахне — хăвăр патăра çитнě Ырă Хыпара — илтсессěн пěлтěр.
Турă ырăлăхне чăннипех те пěлнě кунран пуçласа çав сăмах,
пěтěм тěнчери пекех, сирěн патăрта та сарăлса пырать, хăйěн çи-
мěçне парать. 7 Ун çинчен эсир ěçěмěрти юратнă юлташран, сире
пулăшакан шанчăклă Христос тарçинчен Епафрасран пěлтěр.
8 Святой Сывлăш сире панă юратулăх çинчен вăл пире те каласа
кăтартрě.

*Христос аслӑлӑхӗ тата ӗҫӗ*

[9]Ҫавӑнпа та, сирӗн ҫинчен илтнӗ кунран пуҫласах, эпир сирӗн-
шӗн Турра кӗлтӑватпӑр, тархаслатпӑр. Турӑ ирӗкне сирӗн мӗн пур
ӑспа ӑнланса, чун-чӗмпе ӑнкарса тӗппипех пӗлмелле пултӑрччӗ
тетпӗр. [10]Сирӗн Турра тивӗҫлӗ, пур тӗлӗшрен те Ӑна юрӑхлӑ пу-
рӑнмалла пултӑрччӗ тесе кӗлтӑватпӑр. Кирек епле ырӑ ӗҫӗр те
тухӑҫлӑ пултӑрччӗ, Турра пӗлесси ӳссех пытӑрччӗ. [11]Хӑйӗн хӑватлӑ
мухтавӗпе Вӑл сире, тӗрлӗ вӑй-халпа ҫирӗплетсе, пурне те тӳссе
ирттермешкӗн чӑтӑмлӑх патӑрччӗ. [12]Ҫутӑлӑхри Хӑйӗн еткерне, сӑ-
ваплисен еткерне, илмешкӗн пире те пая кӗртнӗшӗн савӑнса Атте
Турра тав тӑвар. [13]Вӑл пире, тӗттӗмлӗх аллинчен хӑтарса, Хӑйӗн
юратнӑ Ывӑлӗн Патшалӑхне илсе кӗнӗ. [14]Ывӑлӗ пире Хӑйӗн Юнӗ-
пе тӳлесе илнӗ, пирӗн ҫылӑхсене каҫармалла тунӑ. [15]Вӑл – курӑн-
ман Туррӑн сӑнарӗ, Вӑл мӗн пур чӗрӗ чуна пултаричченех пулнӑ.
[16]Мӗншӗн тесен пӗтӗмпех Ун урлӑ пултарнӑ. Пӗлӗт ҫинчине те,
ҫӗр ҫинчине те, курӑнаканнине те, курӑнманнине те: ҫӳлти прес-
толпа хӑватсене, пуҫлӑхсемпе влаҫсене – пурне те Ун урлӑ тата
Уншӑн пултарнӑ. [17]Вӑл пуринчен малтанах пур, пурне те Вӑл тыт-
са тӑрать. [18]Вӑл – Чиркӳ ӳт-пӗвӗн пуҫӗ. Вӑл – пуҫламӑшӗ; пур
тӗлӗшӗнчен те малта пулмашкӑн чӗрӗлсе тӑнисенчен пӗрремӗшӗ.
[19]Мӗншӗн тесен Ашшӗ мӗн пур туллилӗх Унра пултӑр тенӗ, [20]хӗ-
рес ҫинче Вӑл юхтарнӑ Юн урлӑ ҫӗр ҫинчипе тӳперине ҫураҫтарса,
Ун урлӑ пурне те Хӑйӗнпе килӗштерес тенӗ.

[21]Тахҫан эсир те шухӑш-кӑмӑлпа Турӑран ютшӑнса, Унӑн тӑш-
манӗсем пулса пурӑнаттӑрччӗ; ӗҫӗрсем те сирӗн усалччӗ. [22]Халӗ
вара, Христос Ӳт-пӗвӗ урлӑ, Унӑн вилӗмӗ урлӑ Турӑ сире Хӑйӗн-
пе ҫураҫтарнӑ. Ҫакна Вӑл сире Хӑйӗн умне сӑваплӑ та таса,
айӑпсӑр тӑратасчӗ тесе тунӑ. [23]Турӑ умне ҫапла тӑрас тесен си-
рӗн, паллах, ҫирӗп те иккӗленӳсӗр ӗненмелле, Ырӑ Хыпар пара-
кан шанчӑка ҫухатмалла мар. Эсир Ырӑ Хыпара илтнӗ, ӑна ҫӗр
ҫинче пурӑнакансене пурне те пӗлтернӗ. Эпӗ те, Павел, Ырӑ
Хыпар тарҫи пулса тӑтӑм.

*Чиркӳшӗн ӗҫлесе тӑни*

[24]Халӗ эпӗ сирӗншӗн асап курнӑран савӑнатӑп кӑна. Хрис-
тос Чиркӳшӗн – Хӑйӗн Ӳт-пӗвӗшӗн – асап курнӑ. Асап виҫине
тултарас тесе, эпӗ Христос асапӗ ҫумне хамӑн ӳт-пӗвӗм асапне

хушатӑп. [25]Турӑ шухӑшне пурнӑҫламашкӑн — хама сирӗншӗн
шанса панӑ Турӑ сӑмахне пӗлтерсе ҫитермешкӗн — эпӗ Чиркӳ-
шӗн ӗҫлекен ҫын пулса тӑтӑм. [26]Турӑ шухӑшӗ ӗмӗртен ӗмӗре,
ӑруран ӑрӑва вӑрттӑнлӑх пулса упраннӑ, халӗ вара Ӑна ӗненекен-
семшӗн вӑл уҫӑлнӑ. [27]Турӑ Хӑйӗн ҫыннисене ҫав вӑрттӑнлӑх
ытти халӑхсемшӗн мӗн тери чаплӑ пуянлӑх пулнине уҫса пама
кӑмӑл тунӑ. Вӑрттӑнлӑхӗ вара — мухтавне шантаракан хӑвӑр ӑшӑр-
ти Христос. [28]Эпир Христос ҫинчен пӗлтеретпӗр, кашни ҫынна
тӗрлӗ ӑс парса ӑнлантаратпӑр, ӳкӗтлетпӗр. Ҫакна эпир кирек еп-
ле ҫынна та Христоса ӗнентерсе Турӑ умне пӗр кӑлтӑксӑр тӑра-
тас тесе тӑватпӑр. [29]Ҫавӑншӑн эпӗ Унӑн хӑвачӗпе ӗҫлетӗп те, кӗ-
решетӗп те, Унӑн хӑвачӗ манра вӑйлӑн тапса тӑрать.

## 2-мӗш сыпӑк

[1]Сирӗншӗн тата Лаодикири, Иерапольти тӑвансемшӗн, тата
мана курман-пӗлмен мӗн пур ӗненекенсемшӗн хам епле паттӑр-
рӑн кӗрешнине манӑн сире пӗлтерес килет. [2]Вӗсен чӗрисем чи
паха ӑнланулӑхпа пуянланма тата Атте Турӑпа Христос вӑрттӑн-
лӑхне пӗлме юратулӑхпа пӗрлешчӗр тесе, эпӗ вӗсене хастарлатма
тӑрӑшатӑп. [3]Мӗншӗн тесен ӑслӑлӑхпа пӗлӗвӗн мӗн пур пуянлӑхӗ —
Христосра. [4]Ҫакна эпӗ сире суя сӑмаха чӑн туса вӗрентекенсем
пӗри те ан улталайччӑр тесе калатӑп. [5]Кӗлеткемпе сирӗнпе мар
пулин те, чунӑмпа эпӗ сирӗнпех: эсир пӗр-пӗринпе килӗштерсе
пурӑннишӗн, Христоса ҫирӗп ӗненнишӗн питӗ хӗпӗртетӗп.

### *Христоспа пӗрлӗхлӗ ҫӗнӗ пурӑнӑҫ туллилӗхӗ*

[6]Ҫавӑнпа та, эсир Христос Иисус Хуҫамӑра ӗнентӗр пулсан,
малалла та Унпа пӗрлӗхлӗн пурӑнӑр. [7]Тымар ярса Унпа тӗрекле-
нӗр, хӑвӑра вӗрентнӗ ӗненӳпе ҫирӗпленӗр, Турра тав тусах тӑрӑр.
[8]Эй, тӑвансем! Философиленсе, улталаса пустуй япаласем ҫин-
чен вӗрентекенсенчен асӑрханӑр. Вӗсем Христос хыҫҫӑн мар,
этем юмах-халапӗсемпе шухӑш варкӑшӗсем хыҫҫӑн каяҫҫӗ. [9]Тӗ-
рӗссипе вара Унра, ӳтленсе килнӗскерте, Туррӑн пӗтӗм туллилӗ-
хӗ пур. [10]Унпа пӗрлӗхлӗ пулнӑран кӑна эсир те пурӑнӑҫ тулли-
лӗхне илтӗр. Вӑл — ҫӳлти пуҫлӑхсемпе влаҫсен пуҫӗ. [11]Унпа пӗр-
лӗхлӗ пулнине эсир ӳт кастарса палӑртнӑ, анчах та сирӗн ӳтӗре
этем аллипе касман. Сире Христос ӳт каснӑран эсир ҫылӑхлӑ

ӳт-пӳ хăвăрпа хуçаланнинчен хăтăлтăр. 12 Эсир тĕне кĕрсе Хрис-
тоспа пĕрлех вилнĕ, Ăна вилĕмрен чĕртсе тăратнă Турă хăватне
ĕненсе Христоспа пĕрлех чĕрĕлнĕ. 13 Çылăхăрсене пула, ӳт кас-
тарманнине пула эсир те вилĕччĕ. Анчах та Турă, сирĕн çылăх-
сене каçарса, сире те Унпа пĕрле чĕртнĕ. 14 Эпир те, ӳт кастар-
нисем, саккун тăрăх парăмлăччĕ. Çав парăм хучĕ тăрăх пирĕн
мĕн-мĕн тумаллине чĕрсе пăрахса, хутне хĕрес çине çапса, Хрис-
тос Хăйĕн асапĕпе пирĕн парăма пĕтернĕ. 15 Çапла Вăл тĕттĕмлĕх
пуçлăхĕсемпе влаçĕсен вăйне Хăйĕн хăвачĕпе пĕтерсе чаплăн
çĕнтернĕ, вĕсенчен тĕнче кулли тунă.

16 Эппин сире ĕçме-çимене тиркеменшĕн е иудейсен уявне,
çĕнĕ уйăхне, шăмат кунне тытса пыманшăн никам та ан ӳпке-
лештĕр. 17 Мĕншĕн тесен çаксем йăлтах — килмеллин мĕлки çеç
пулнă, килмелли — Христос — халĕ Хăй кунта. 18 Эсир çĕнсе ил-
нĕ парнене хăйсене хăйсем мĕскĕн пек кăтартса, ангелсене пуç
çапса киленекен, хăйсем курманнине тĕпчекен çынсем туртса ан
илейччĕр. Хăйсен ăсĕпе сăлтавсăрах мухтанма юратаççĕ пулин
те, ăсĕ вĕсен — çĕр çинчиллех. 19 Вĕсем пуçа пăхăнмаççĕ. Пуç
йĕркелесе пынипе вара, шăмă сыпписемпе тата шăнăрсемпе
пĕтĕçсе, пĕтĕм ӳт-пӳ Турă палăртнă пек аталанать. 20 Çапла ва-
ра, эсир Христоспа пĕрле вилнĕ, этемĕн шухăш варкăшĕсенчен
хăпнă. Мĕншĕн-ха эппин, çак тĕнче çыннисем пек, авалхи йĕр-
кесене пăхăнатăр? 21 «Ăна ан сĕртĕн», «куна ан çи», «çавна ан тĕ-
кĕн», — тенине итлетĕр? 22 Çав чарнă ĕçме-çиме вăл хырăмра
çĕрмелли япала кăна-çке! Эппин, йăли-йĕрки те, вĕрентĕвĕ те —
этем шухăшласа кăларнăскерсем анчах. 23 Вăл вĕрентӳсем çиел-
тен кăна ăслăн курăнаççĕ. Тĕрĕссипе, хăй ирĕкне Турă ирĕкĕ те-
ни те, хăйне мĕскĕн пек кăтартса, ӳт-пĕвне хавшатса йăпанни те
çылăхлă кăмăл хыççăн кайниех.

### 3-мĕш сыпăк

1 Çапла вара, Христоспа пĕрле вилĕмрен чĕрĕлтĕр пулсан, тӳпе-
нелле ăнтăлăр. Унта, Туррăн сылтăм енче, Христос ларать. 2 Çĕр
çинчи пирки мар, çӳлти çинчен шухăшлăр. 3 Мĕншĕн тесен çĕр çин-
чи çылăхлă пурăнăçшăн эсир вилĕ, сирĕн пулас пурăнăçăр Турăпа
юнашар ларакан Христоспа пĕрле упранать. 4 Сирĕн пурăнăçăр —
Христос. Вăл тепре килсессĕн эсир те Унпа пĕрле мухтавлă пулăр.

[5] Эппин ҫӗр ҫинчи кӑмӑл-туйӑмсене: аскӑнлӑха, ирсӗрлӗхе,
путсӗр кӑмӑл туртӑмне, киревсӗр ӗмӗтсене, ҫӑткӑнлӑха – пӑра-
хӑр. Ҫӑткӑнлӑх вӑл кӗлеткесене пуҫҫапнипе пӗрех. [6] Ҫавӑн пек
кӑмӑл-туйӑмлисене, Турра хирӗҫҫисене, Турӑ ҫилли ҫитет. [7] Тах-
ҫан, вӗсемпе пӗрле пурӑннӑ чухне, эсир хӑвӑр та ҫавнашкал кӑ-
мӑл-туйӑм хыҫҫӑн каятӑрччӗ. [8] Халӗ ҫавсене йӑлтах: тарӑхӑва,
ҫилле, хаярлӑха – пӑрахӑр. Сирӗн чӗлхе-ҫӑвартан хурласа калаҫ-
ни, усал сӑмах ан тухтӑр. [9] Пӗр-пӗрне ан суйӑр, мӗншӗн тесен
эсир кивӗ ҫынна унӑн мӗн пур ӗҫӗ-пуҫӗпех хӑвӑр ҫинчен кивӗ
тумтир пек хывса пӑрахрӑр, [10] ҫӗннине тӑхӑнтӑр. Турра пӗлес
тесе эсир ҫӗнелсе, хӑвӑра Пултаракан евӗрлӗ пулса пыратӑр,
[11] ҫавӑнпа грек та, иудей та, ӳт кастарни те, ӳт кастарманни те,
варвар та, скиф та, чура та, ирӗкли те ҫук. Христос кӑна пур;
Вӑл – пӗтӗмпех, Вӑл – пуринче те.

[12] Ҫапла вара, эсир Турӑ суйласа илнисем пулсассӑн, Унӑн
сӑваплӑ та юратнӑ ҫыннисем пулсассӑн, ҫӗнӗ тумтир тӑхӑнӑр.
Ҫӗнни тени ҫакӑ пултӑр: хӗрхенӳ, ырӑлӑх, лӑпкӑлӑх, йӑвашлӑх,
тӳсӗмлӗх. [13] Пӗр-пӗринпе кӑмӑллӑ пулӑр, пӗр-пӗрин хушшинче
кӳренмелли тупӑнсан, каҫарӑр. Христос сире каҫарнӑ, эсир те
ҫапла тӑвӑр. [14] Ҫак ҫӗнӗ тум ҫинчен юратулӑх пиҫиххине ҫыхӑр.
Мӗншӗн тесен пӗтӗмпех ҫыхӑнтарса тӑраканни, пӗр кӑлтӑксӑр
тӑваканни – юратулӑх. [15] Сире пӗр ӳт-пӳ пулса канӑҫлӑ пурӑнма
чӗнсе илнӗ. Чӗрӗрсенче Турӑ канӑҫлӑхӗ хуҫалантӑр, кӑмӑлӑрсем
пархатарлӑ пулччӑр. [16] Христос сӑмахӗ сирӗн ӑшӑрта туллин тӑ-
тӑр. Пӗр-пӗрне псалом, мухтав юрри, кӗлӗ юрри сӑмахӗсемпе ӑс-
лӑн ӳкӗтлӗр. Пӗтӗм чӗререн Хуҫа Турра тав туса юрлӑр. [17] Эсир
кирек мӗн тусан та, кирек мӗн каласан та – пӗтӗмпех Иисус
Христос Хуҫамӑр ячӗпе тӑвӑр, Ун урлӑ Атте Турра тав тӑвӑр.

### *Пӗрлехи ҫӗнӗ пурӑнӑҫри тивӗҫсем*

[18] Эй, арӑмсем! Упӑшкӑрсене пӑхӑнӑр, ҫакӑ сирӗн Хуҫа Турӑ
умӗнчи тивӗҫӗр. [19] Эсир те, упӑшкисем, арӑмӑрсене юратӑр, вӗ-
семпе кӑра ан пулӑр.

[20] Эй, ачасем! Аҫӑр-аннӗре пур тӗлӗшӗнчен те итлӗр, ҫакӑ Хуҫа
Турра юрӑхлӑ. [21] Эй, ашшӗсем! Ачӑрсен ӗмӗтне татас мар тесен,
вӗсене пули-пулми ан тарӑхтарӑр.

[22] Эй, чурасем! Ҫӗр ҫинчи хуҫӑрсене пур тӗлӗшӗнчен те пӑхӑнӑр.
Йӑпӑлтисем пек вӗсене куҫ умӗнче юрас тесе кӑна мар, Турӑран

хăраса, пĕтĕм чĕререн тăрăшăр. [23]Хăвăр мĕн тунине йăлтах çын-
шăн мар, Хуçа Турăшăн тунă пек пĕтĕм чун-чĕререн тăвăр. [24]Турă
сире Хăйĕн еткерне парасса эсир пĕлетĕр, мĕншĕн тесен Христос
Хуçамăршăн тăрăшатăр. [25]Кам та кам усал тăвать, ăна хăйне те
усалпа тавăрса парĕç, мĕншĕн тесен Турăшăн пур çын та пĕрех.

**4-мĕш сыпăк**

[1]Эй, хуçасем! Чурăрсемпе тĕрĕс те тӳрĕ пулăр. Çакна астусах
тăрăр: сирĕн те тӳпере Хуçăр пур.

*Чĕнсе каланисем*

[2]Турра ялан кĕлтăвăр; тимлесе, тав туса кĕлтăвăр. [3]Пирĕншĕн
те кĕлтăвăр: Турă пире Христосăн вăрттăн чăнлăхĕ çинчен Хăйĕн
сăмахне вĕрентмешкĕн çул уçса патăрччĕ. Христос çинчен вĕ-
рентнĕшĕн эпĕ тĕрмере ларатăп та. [4]Ӳкĕт сăмахĕсене манăн
кирлĕ пек вĕрентмелле пултăрччĕ тесе кĕлтăвăр. [5]Ĕненменни-
семпе хутшăнни сая ан кайтăр тесен, хăвăра ăслă-тăнлă тытка-
лăр. [6]Кашнинех кирлĕ пек хурав памашкăн сăмахăр яланах кă-
мăллă та ырăнлă пултăр.

*Çыру вĕçĕнчи саламсем*

[7]Ман çинчен сире ĕненӳри юратнă тăванăмăр, Хуçамăрăн
шанчăклă тарçи, ĕçри юлташăм Тихик каласа парĕ. [8]Эсир мĕнле
пурăннине пĕлме, сире хавхалантарма эпĕ ăна сирĕн пата ятăм.
[9]Унпа пĕрле тата Турра чунтан парăннă, ĕненӳри юратнă тăванă-
мăра Онисима ятăм. Вăл сирĕн хушшăртан тухнăскерех. Вĕсем
сире кунти ĕç-пуç çинчен каласа кăтартĕç.

[10]Манпа пĕрле тĕрмере ларакан Аристарх тата Варнавăн иккĕ-
мĕш сыпăкри тăванĕ Марк сире салам яраççĕ. (Хăвăр патăра
пырсассăн Марка хапăлласа йышăнăр тесе сире хушнăччĕ ĕнтĕ.)
[11]Тата сире Иуст текен Иисус та салам калать. Иудейсенчен çав-
сем кăна Турă Патшалăхĕшĕн манпа пĕрле ĕçлесе тăчĕç, маншăн
чун уççи пулчĕç. [12]Сире тата Иисус Христос чури, хăвăр хуш-
шăртан тухнă Епафрас саламлать. Сирĕн пĕр кăлтăксăр ĕненсе
çирĕп тăмалла пултăрччĕ, Турра юрăхлине пĕтĕмпех туса пу-
рăнмалла пултăрччĕ тесе вăл тăтăшах хĕрӳллĕн кĕлтăвать. [13]Вăл
сирĕншĕн тата Лаодикипе Иерапольти ĕненекенсемшĕн питĕ

тăрăшнине эпĕ çирĕплетсех калама пултаратăп. [14]Пирĕн савнă
тухтăр Лука тата Димас сире салам яраççĕ. [15]Лаодикири ĕнене-
кен тăвансене, Нимфана тата ун килĕнче пуçтарăнакан ĕненекен
ушкăнрисене пирĕнтен салам калăр.

[16]Çак çырăва хăвăр вуласа тухсассăн ăна Лаодикири ĕненекен
ушкăнрисене вулаттарăр. Хăвăр вара эпир Лаодикине çырса
янине илсе вулăр. [17]Архипа çакна калăр: «Асту, Хуçа Турă сана
Хăйшĕн ĕçлесе тăма суйласа илнĕ, çав ĕçе лайăх ту».

[18]Çак салам сăмахĕсене эпĕ, Павел, хам аллăмпах çыратăп.
Эпĕ тĕрмере ларнине асра тытăр. Сире пурне те Турă ырăлăхĕ
пултăр. Аминь.